Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

27 (7881) № * Юн кун, 2011 ҫулхи ака (апрель) уйӑхӗн 13-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Ял хуҫалӑх министрӗ хуҫалӑхсенче те пулчӗ

Иртнӗ эрне кун районти хуҫалӑхсем ҫур акине тӗплӗн хатӗрленсе ирттерес ыйтупа семинар-канашлӑва Ильич яч. хис. хуҫалӑха пуҫтарӑнас умӗн хуҫалӑх ертӳҫисемпе специалисчӗсем районти хуҫалӑхсенче ку енӗпе лару-тӑру епле пулнипе паллашрӗҫ. Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов ертсе пыракан ушкӑн чи малтанах «Путь Ильича» АФ чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑра пулчӗ.

– Ҫур аки ирттерме топливо, удобрени ҫитет. 59 тонна элитӑллӑ вӑрлӑх туянтӑмӑр хальлӗхе, – пӗлтерчӗ хуҫалӑх ертӳҫи А.В. Воробьев. Ял хуҫалӑх машинисене юр ӑшӗнчен кӑларнӑ. Анчах та юсав ӗҫӗсене пуҫлаҫҫӗ кӑна.

– Ирхи 8 сехетрен пуҫласа каҫхи 4 сехетчен васкамасӑр ӗҫленипе малалла кайма йывӑр, – ӗҫе хӑвӑртлатмаллине, ӗҫ дисциплинине хытармаллине палӑртсах каларӗ Юрий Александрович.

Е. Андреев яч. хис. хуҫалӑхра механизаторсем юсав ӗҫӗпе аппаланатчӗҫ.

– Хальлӗхе 8 тонна бензин, 7 тонна топливо пур. Ильич яч. хис. хуҫалӑхран элитӑллӑ тырӑ вӑрлӑхне туянтӑмӑр, – паллаштарать хатӗрленӳ ӗҫӗсемпе хуҫалӑх ертӳҫи В.И. Семенов.

Виталий Иосифович калӑнӑ тӑрӑх механизаторсем ҫитменни ку ҫур акинче йывӑрлӑх кӑларса тӑратма кирлӗ мар. Вӗсене вӗрентсе хатӗрленӗ. «Халӗ ҫӗнӗ ДТ-150 трактор кирли пирки шутлама пуҫларӑмӑр», - терӗ вӑл. «Беларусь» тракторсене юсанӑ. Апла пулин те хуҫалӑх паян ҫур акине хатӗр тесе калама ир-ха.

Суворов яч. хис. хуҫалӑх вара паян тесен паян ҫур акине тухма хатӗр.



Техника та ку хуҫалӑхра нумаях пулмасть илнӗскер, ҫӗнӗ. Машинӑпа трактор паркӗнче йӗркелӗх хуҫаланать. Ятарлӑ хурал системин специалисчӗсем кунти харпӑрлӑх хӑй вырӑнӗнче пулнишӗн яваплӑ.

– Ҫавӑн пекех сӗт-ҫу фермине сыхлассине те хурал системин специалисчӗсем хӑйсем ҫине илнӗ, - ӑнлантарать хуҫалӑхӑн тӗп агрономӗ Г.Н. Албутова.

Сыхлав ӗҫӗнче ҫеҫ мар, ҫӗре пӑхса тӑрассинче те ҫӗнӗлле ӗҫлеҫҫӗ ку хуҫалӑхра. Уйсенче плугпа усӑ курас вырӑнне темиҫе хут сӳрелессине пысӑк тимлӗх уйӑраҫҫӗ. Ҫакӑ вӗсене ҫум курӑкпа кӗрешме те пулӑшать.

Семинар-канашлӑва килсе ҫитнӗ Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ, ял хуҫалӑх министрӗ С.В. Павлов Юрий Александрович ертсе пыракан ушкӑнпа чи малтан Чапаев яч. хис. хуҫалӑхра пулчӗ. Сергей Владимирович тӳрех хуҫалӑхра ҫунтармалли-сӗрмелли материалсем пуррипе, ҫур акинче ӗҫе миҫе сменӑпа йӗркеленипе интересленчӗ. Хуҫалӑх ертӳҫи И.Ю. Захаров каланӑ тӑрӑх хатӗрленӳ ӗҫӗсем пыраҫҫӗ: ҫунтармаллисӗрмелли материалсем, вӑрлӑх туянас ӗҫ пырать. Ӗҫ условийӗсемпе те ҫур акине хутшӑнакансене паллаштарнӑ. Дисциплинӑна пӑсмасан кунта механизаторсем ҫур аки вӑхӑтӗнче 17 – 18 пин тенкӗ ӗҫлесе илме пултараҫҫӗ. Унсӑр пуҫне кӑнтӑрла тата каҫхине тӳлевсӗрех апат ҫитереҫҫӗ. Натурӑпа тӳлессине те пӑхса хӑварнӑ. Кӑҫал хуҫалӑх 30 гектар кукуруза акма палӑртнӑ. Унта ӗҫлемелли техника Ильич яч. хис. хуҫалӑхӑн пур.

– Пӗрле ӗҫлеме калаҫса татӑлтӑмӑр, – терӗ Игорь Юрьевич.

Министр ку пуҫарӑва ырларӗ.

Чкалов яч. хис. хуҫалӑхра та ҫур акине хатӗрленес ӗҫ малалла пырать. Сергей Владимирович кунта хуҫалӑх ҫӗр улми лартас ыйту ҫине епле пӑхнипе кӑсӑкланчӗ. «Иккӗмӗш ҫӑкӑра» та лартма хатӗрленеҫҫӗ хуҫалӑхра. Министр ҫитес вӑхӑтра республикӑна ҫӗр улми вӑрлӑхӗн илсе килессине, хуҫалӑхсене те, уйрӑм ҫынсене те ӑна килограммне 24 тенкӗпе сутасси ҫинчен пӗлтерчӗ.

Ильич яч. хис. хуҫалӑхра семинар-канашлӑва хутшӑнакансем ял хуҫалӑхӗнче кирлӗ ҫӗнӗ техникӑпа паллашрӗҫ. Паянхи кун ыйтакан ҫӗнӗ йышши техника туянассине районта мала хунине, хӗрӳ ӗҫсинче вӑрӑмлатнӑ кун йӗркине ӗҫлессине министр ырларӗ. Ҫур акине кӗске вӑхӑтра – пӗр эрне хушшинче иртермеллине палӑртрӗ.

**Л. ПАВЛОВА.**

Раҫҫейре

## Иртнӗ ҫул президентпа премьер мӗн чухлӗ ӗҫлесе илнӗ?

РФ Президенчӗ Д.А. Медведев налук органӗсене иртнӗ ҫулхи тупӑш пирки пӗлтернӗ. 2010 ҫулта вӑл 3,378 млн тенкӗ ӗҫлесе илнӗ. 2009 ҫулта – 3,335 млн тенкӗ ытларах.

Мӑшӑрӗпе Светлана Медведевӑпа вӗсен 367,8 тӑваткал метрлӑ хваттер, Раҫҫейри банксенче 4,961 млн тенкӗ пур. Аренда шучӗпе 4,7 пин тӑваткал метр ҫӗрпе усӑ кураҫҫӗ. Вӗсен 1948 ҫулта кӑларнӑ «Победа» автомобиль пур.

РФ премьер-министрӗ В.В. Путин иртнӗ ҫул 5,042 млн тенкӗ ӗҫлесе илнӗ. 2009 ҫулта – 3,89 млн тенкӗ. Премьер харпӑрлӑхӗнче хваттер, гараж, 1,5 пин тӑваткал метр ҫӗр лаптӑкӗ. Тепӗр хваттерпе гараж сроксӑр тапхӑра усӑ курма илнӗ.

## Тата 100 пин автомобиль

Юрӑхсӑра тухнӑ ҫӑмӑл машинӑсене пӑрахӑҫлас программӑна 2011 ҫул вӗҫлениччен тӑснӑ. Ҫакна валли тата 5 млрд тенкӗ уйӑраҫҫӗ. Ҫапла вара тепӗр 100 пин ҫын ҫӑмӑллатнӑ йӗркепе ҫӑмӑл автомашина туянма пултарать. Хыҫҫӑн грузовиксене пӑрахӑҫлас программа ӗҫлеме пуҫлать.

Кун пирки Владимир Путин иртнӗ юн кун ятарлӑ канашлура пӗлтернӗ.

Вӗрентӳ

## Учительсен ӗҫ укҫи хушӑнать-и?

Арелӗн 4-мӗшӗнче «Единая Россия» парти ертӳҫи, правительство пуҫлӑхӗ В. Путин парти членӗсемпе тӗл пулу иртternӗччӗ. Унта вӑл вӗрентекенсен ӗҫ укҫийӗ пирки те сӑмах хускатрӗ. В. Путин каланӑ тӑрӑх учительсен ӗҫ укҫи вӗсем ӗҫлесе пурӑнакан регионти вӑтам ӗҫ укҫин калӑпӑшӗ патне сывхармалла. Сӑмахран, Мускавра ҫак шайлашӑва тума учительсен ӗҫ укҫине 30 процента яхӑн ӳстермелле.

Республика Президенчӗ М. Игнатьев ҫак ыйтӑва апрелӗн 9-мӗшӗнче Министрсен Кабинечӗн членӗсемпе тата федераллӑ ведомствӑсен территори органӗсен ертӳҫисемпе иртернӗ канашлура пӑхса тухнӑ. Правительство пуҫлӑхӗ хушнипе республикӑра учительсен ӗҫ укҫине тӳлессипе анализ тӑваҫҫӗ, малашне ӗҫ укҫин калӑпӑшне ӳстерессипе ӗҫлеҫҫӗ. Мӗншӗн тесен В. Путинӑн хушӑвӗ 2011 ҫулхи сентябрӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса учительсен ӗҫ укҫине ӳстерессипе сыхӑннӑ. Ыйтӑва татса парас тӗллевпе ҫак уйӑхрах пирӗн республикӑра координаци канашӗпе ӗҫ ушкӑнӗ йӗркеленсе ӗҫлеме тытӑнӗҫ.

2010 ҫулта Чӑваш Республикинчи вӑтам ӗҫ укҫи 13051 тенкӗ те 10 пуспа танлашнӑ. Ку – регион кӑтартӑвӗ. Районти вӗрентӳ пайӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх учительсен ӗҫ укҫин вӑтам виҫи пӗлтӗр 11011 тенкӗ пулнӑ. Ку кӑтартӑва директорсен ӗҫ укҫине кӗртмесӗр шутланӑ. Учителӗн тӗмӗшле ӗҫ укҫине оклад, хавхалантару пайӗ тата класс ертӳҫисене тӳлекен укҫана пӗрле хушса палӑртнӑ.

**Н. АНДРЕЕВА.**

## Олимпиадӑра – малтисен ретӗнче

Хастар ҫамрӑксем

Кашни вӗренӳ ҫулӗнчех вӗренекенсен Пӗтӗм Раҫҫейри олимпиади иртет. Вӑл тӑватӑ тапхӑрпа пулать: пӗрремӗш – шкулсенче, иккӗмӗш – район шайӗнче, виҫҫӗмӗш – регион шайӗнче, тӑваттӑмӗш – Раҫҫей шайӗнче.

Олимпиадӑн юлашки тапхӑрӗнче пирӗн район вӗренекенӗсем призерсен шутне лекни пӗрремӗш ҫул мар. Ку савӑнтарать паллах. Акӑ кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче те Орининти вӑтам шкулта вӗренекен Алена Алексеева право енӗпе республика шайӗнче ҫӗнтерӳҫӗ пулса Раҫҫей шайӗнче призер пулса тӑчӗ.

Районта нумайрах балл пухса малти вырӑнсене йышӑннӑ 99 вӗренекен ҫак олимпиадӑн республика тапхӑрне хутшӑнчӗ. 17 вӗренекен малти вырӑнсене йышӑнма пултарчӗ.

Республика шайӗнчи ҫӗнтерӳҫӗсемпе призерсенчен малтанах олимпиадӑна темиҫе предметпа хутшӑнса призер пулма тивӗҫнисене палӑртмалла. Мӑн Сӗнтӗр шкулӗнче 11 класра вӗренекен Иван Петров ОБЖ предмечӗпе (учителӗ И.В. Семенов) 2-мӗш, биологипе (учителӗ А.И. Яшкина) 3-мӗш вырӑнсем ҫӗнсе илчӗ. Муркашри вӑтам шкулта 10 класра вӗренекен Егор Ярухин биологипе (учителӗ В.Н. Иванова) 3-мӗш, ОБЖ предмечӗпе (учителӗ В.Г. Львов) 3-мӗш вырӑнсене тухрӗ. Муркашри вӑтам шкулта 10 класра вӗренекен Елена Михайлова обществознанипе (учителӗ Г.Н. Тимофеева) 3-мӗш, литературӑпа (учителӗ Р.В. Николаева) 3-мӗш вырӑнсене ҫӗнсе илчӗ.

Республика шайӗнчи олимпиадӑра ҫӗнтерӳҫӗ ятне тивӗҫнисем те пур. Вӗсем: Орининти вӑтам шкулта вӗренекен Алена Алексеева (11 класс) тата Муркашри вӑтам шкулта вӗренекен Елена Ефремова (9 класс). Алена – право предмечӗпе (учителӗ В.И. Алексеева), Елена чӑваш чӗлхипе литература енӗпе (учителӗ Е.К. Михайлова) ҫӗнтерчӗ.

Республикӑра палӑрнӑ ытти вӗренекенсен результачӗсемпе те паллашар. Вӗсем ҫапла: Мӑн Сӗнтӗр шкулӗнче вӗренекен Изабелла Матвеева тата Павел Белов иккӗшӗ те ОБЖ предмечӗпе (учителӗ И.В. Семенов) 3-мӗш вырӑнта; Йӳҫкассинчи вӑтам шкулта вӗренекен Надежда Арсентьевӑпа Алина Степанова обществознани предмечӗпе (учителӗ В.И. Тихонов) иккӗшӗ те 3-мӗш вырӑнта; Муркашри вӑтам шкулта вӗренекен Олимпиада Федорова литературӑпа (учителӗ Л.Ю. Краснова) 3-мӗш вырӑнта; Орининти вӑтам шкулта вӗренекен Ольга Егорова вырӑс чӗлхипе (учителӗ В.В. Калинина) 3-мӗш вырӑнта; Кашмашри тӗп шкулта вӗренекен Марта Ишакова экологи предмечӗпе (учителӗ Э.А. Васильева) 3-мӗш вырӑнта; Калайкассинчи вӑтам шкулта вӗренекен Михаил Карандаев биологипе (учителӗ Г.В. Лебедева) 3-мӗш вырӑнта; Турайри вӑтам шкулта вӗренекен Екатерина Герасимова (учителӗ А.Ю. Герасимова) технологи предмечӗпе 2-мӗш вырӑнта.

Районти кашни вӗренекенӗн ҫак кӑтартусем патне туртӑнса ӑслӑлӑх тӗнчинче паларасчӗ.

**А. ЛЕСКИНА,**
**районти вӗрентӳ пайӗн тӗп эксперт специалисчӗ.**

Саламлатпӑр



Юратнӑ мӑшӑра, аннене, асаннене – Муркашра пурӑнакан **Нина Евстафьевна КИСЕЛЕВӐНА** 60 ҫул тултарнӑ ятпа чунчӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Сирӗн ӗмӗрӳ вӑрӑм, сывлӑху ҫирӗп пултӑр, кӗрекӳ ҫӑкӑр-тӑвартан ан татӑлтӑр. Малашне те ачусемпе, мӑнукусемпе, мӗн пур тӑванпа пӗрле савӑнса пурӑнмалла пултӑр. Эпир сире юрататпӑр, хисеплетпӗр, сирӗнпе мухтанатпӑр.

**Салампа: мӑшӑрӗ, ывӑлӗ, хӗрӗпе кӗрӳшӗ, мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем.**

Хаклӑран та хаклӑ аннене, аппана, хӗрӗме, кинӗме – Анаткас Апаш ялӗнче пурӑнакан **Галина Григорьевна ФЕДОРОВӐНА** 55 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑхпа вӑй-хал, тату пурнӑҫпа ӑш пиллӗх сунатпӑр. Татах нумай ҫул пурӑнма Турри чир-чӗртен сыхлатӑр, телей парнелетӗр.

**Салампа: ашшӗ, ывӑлӗ, йӑмӑкӗсем, аппӑшӗ, тӑванӗсем, шкулта пӗрле вӗреннисем, ял-йыш.**

Ҫырӑнтару

**Хаклӑ вулаканӑм!**
**Райхаҫата иккӗмӗш ҫур ҫултан илсе тӑма ҫырӑнтарас тапхӑр малалла пырать. Ҫырӑнтару хакӗ унчченхиех – 191 тенкӗ те 70 пус (ултӑ уйӑха).**

2011 çул – Космонавтика çулталăкĕ

## Шупашкарта ĕçлеттĕм ун чухне



Пирĕн ентеш Андриян Григорьевич Николаев космоса вĕçсе кайни пирки эпĕ Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче ĕçленĕ чухне радиопа пĕлтернĕччĕ. Ун чухне хамăр Чăваш Республикин космонавчĕпе куçа-куçăн тĕл пулма май пуласси пирки шухăшлама та пултарайман.

Андриян Николаев космоса 1962 çулхи çурла уйăхĕнче вĕçнĕччĕ. Кайран вара хаклă хăна хăй çуралса ӳснĕ, пĕлӳ илнĕ тăван республикăна тĕл пулăва килчĕ.

Эпĕ вăл килесси пирки пĕлмен-ха. Манăн ун чухне заводра иккĕмĕш сменăра ĕçлемеллеччĕ. Эпĕ ĕçе кĕрес умĕн «Родина» кинотеатра кино пăхрăм та Хĕрлĕ площадь еннелле çуранах утрăм.

Республикăн тĕп музейĕ ун чухне кивĕ чиркӳ çуртĕнче вырнаçнăччĕ. Эпĕ унта çитнĕ май тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм. Картиш тата алăк тавралла халăх йышлă пухăнса тулнă. Хăшĕпĕри картиш çине улăхса ларнисем те пур. Эпĕ мĕн пулнипе интересленсен мана Андриян Николаев космонавт музее килесси пирки пĕлтерчĕç.

Нумаях та тăмарăмăр, пĕр ушкăн çул урлă музей патне каçнине асăрхарăмăр. Ушкăн хушшинче çар формиллĕ çын та пурччĕ. Пуçĕнче карттус. Çакă пулчĕ те ĕнтĕ чăвашсен пĕрремĕш космонавчĕ. Эпĕ ăна темĕнле пăхаттир, Илья Муромец пек çын тесе шухăшланăччĕ. Вăл вара вăтам пӳсиллĕ, тăп-тăп кĕлеткеллĕ çынах. Пухăннисене аллипе сулса саламларĕ.

Унччен те пулмарĕ пĕри: «Андрияна салам! Андрияна мухтав!»– тесе кăшкăрса ячĕ. Ыттисем те кăшкăрма тытăнчĕç. Пурте тăвăллăн алă çупаççĕ.

Андриян Николаев тата ăна ертсе çӳрекен ушкăн музеелле çул тытрĕ. Кайран ăçта каясси пирки ыйтса тăмарăм, манăн хăвăртрах ĕçе васкамалла пулчĕ.

Космонавтика кунĕнче кашни çулах çак тĕл пулăва аса илетĕп. Андриян Николаев палăкне Шупашкарта вырнаçтарсан малтанхи кунсенчех унта кайса пуç тайма ĕмĕтленетĕп.

**Н. ПЕТРОВ, ĕç ветеранĕ.**
Нискасси ялĕ.

## Манăн тӳпе те пур

Çын пĕрремĕш хут космоса вĕçĕренне 50 çул çитрĕ. Çак кунсенче Раççей космонавтики пирки калакан-çыракан нумай. Манăн та çак пĕлтерĕшлĕ, интереслĕ отрасль аталанăвĕн пĕр енĕ пирки каласа парас кăмăл пур. Паллах, унта хамăн хутшăнма тӳр килнĕрен.

Ача чухне эпĕ космонавт пулма мар, ĕç çак отраслĕпе çыхăнма пултарассине те ĕмĕтленмен. Пурнăç вара пĕтĕмпех хăй майлă çавăрчĕ...

1980 çулта Пензăри политехника институтне Ярославльти конструктор бюровĕн ертӳçи Олег Гаврилович Шебашов килнĕччĕ. Вăл тин çеç вĕренсе пĕтерекен специалистсен пĕр ушкăнне ĕçлеме илсе каяс тĕллевпе çитнĕ иккен. Эпĕ шăпах вăл суйласа илнĕ çамрăк специалистсен ушкăнĕнче пултăм. Шел те, Олег Гаврилович çул çинче, Мускавра, сарăмсăр вилсе кайрĕ.

Бюрора пирĕн ушкăна тӳрех кăткăс проектсемпе ĕçлеме шанса пачĕç. Ĕçри кашни утăма тĕплĕн тума тăрăшрăмăр. Çавăнпах пулĕ тепĕр çул та çамрăк специалистсене эпир пĕтернĕ аслă шкултанах пухрĕç.

Вăл вăхăтра шанчăклă çĕнĕ хĕç-пăшал туса кăларакан çĕршыв вăйлă шутланнă, унран хăранă. Хальхи пекех пирĕн çĕршыв космос енĕпе те малтаччĕ. (Юлашки вăхăтра Америка çыннисем космоса пирĕн шанчăклă карапсемпе вĕçеççĕ.) Çак шая тытса тăрас ĕçе хутшăннă та эпир. Космосра пирĕн спутниксемпе тăшман хуçаланма ан пултартăр, çĕр-шывăн системисем нумай вăхăт хушши йĕркеллĕ ĕçлеччĕр – çапла пулнă пирĕн ума лартнă тĕллев. Эпĕ информация йышăнса унпа усă курмалли аппаратсем туса кăларассипе ĕçленĕ. Кунта, çĕр çинче, космосра вĕçекен спутникăн хăш япали мĕншĕн йĕркерен тухнине пĕлмеллеччĕ. Пирĕн ĕçрен космосра вĕçекен техника пăтăрмахсăр ĕçлесси нумай килетчĕ.

Ĕç йывăр, анчах та интереслĕччĕ. Яваплăха туйни, ĕçе контроллесси питĕ çӳллĕ шайраччĕ. Пĕр-пĕр издели çине этикеткăна хăш клейпа çыпăçтарнине те ятарлă журнала çырса хумаллаччĕ. Çав клейăн тĕслĕхĕ те упранатчĕ.

Наукăпа производство тачă çыхăнса тăнă вырăнта ĕçлени маншăн, çамрăк инженершăн, питĕ пысăк вырăн йышăннă. Çирĕп «шкул» витĕр тухни, микроэлектроникăна çĕнĕ технологисене алла илсе пыни каярах шыв айĕнчи атом карапĕсем валли приборсем шутласа кăларас ĕçре те чылай пулăшрĕ.

Ĕçри малтанхи утăмсем çĕршыв аталанăвĕпе тачă çыхăнса тăнăран, Совет Союзĕ хăйĕн черетлĕ спутнике вĕçтерсе яни çинчен радиопа пĕлтерсен кăмăл хăпаратчĕ. Çак пĕлтерĕшлĕ ĕçре манăн та тӳпе пурри мăнаçлантаратчĕ.

**В. ЛАВРЕНТЬЕВ,**
**район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пай ертӳçи.**

Йĕрке хуралĕнче

## Айăпа укçапа саплаштараймăн

Мартăн 25-мĕшĕнче районти ГИБДД инспекторĕ Нискасси ялĕ çывăхĕнчи çул çинче черетлĕ тĕрĕслевре пулнă. «Шевроле Ланос» маркăллă автомашина водителĕ çул-йĕр правилине пăснăран милицин аслă лейтенанчĕ ăна чарнă. Йĕркене пăснă водитель тĕлĕшпе постановлени çырма тивнĕ. Çак тĕллевпе ăна ГИБДД инспекцийĕн автомашини çине ларма сĕннĕ. Саккунпа килĕшӳлĕн йĕркене пăсаканăн 300 тенкĕ штраф укçи тӳлемелле. Анчах та водитель хăй тĕлĕшпе постановлени çыртарас мар тесе ГИБДД ĕçченне 200 тенкĕ укçа кăларса парать. Çакă вара саккуна пăсни пулать. Çапла вара 1965 çулта çуралнă укçа сĕнекен тĕлĕшпе РФ Уголовнăй кодексĕн 291 статйин 2 пайĕпе уголовлă ĕç пуçарма тивет. Халĕ ку ĕçпе следстви комитечĕ тимлет.

**В. ДОЛГОВ,**
**уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсен следователĕ, юстици капитанĕ.**

# «Вăтам» хак пачĕç

Канашлу

***Апрелĕн 7-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче канашлу иртрĕ. Районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем хăйсен кăçалхи пĕрремĕш кварталти ĕç-хĕлĕн итогĕсене тишкерсе хакларĕç, умри малашнехи задачăсене уçăмлатрĕç. Канашлу ĕçне ЧР шалти ĕçсен министрĕн çумĕ Ю.В. Шаповалов, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, район прокурорĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Ю.М. Семенов, район сучĕн председателĕ Э.Л. Тарасова, уголовлă исполнительнăй инспекци пуçлăхĕ В.В. Кожевников, суд приставĕсен службин представителĕ С.П. Шарапов, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем хутшăнчĕç.***

Районти шалти ĕçсен пайĕн кăçалхи январь–март уйăхĕсенчи оперативлă ĕçĕ-хĕлĕ пирки чарăнса тăнă май шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е.И. Плечов çавна палăртрĕ. Çак тапхăрта пĕтĕмпе 109 преступлени регистрациленĕ. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 2,7 процент сахалрах. Преступленисене уçса парасси 5,6 процент ӳснĕ, 93,8 процентпа танлашнă. Уйрăм çынсенчен килнĕ заявленисемпе пĕлтернисене 984 регистрациленĕ. Ку кăтарту иртнĕ çулхинчен 12,6 процент нумайрах.

«Апла пулсан çынсем пире шанасси ӳссе пырать, вĕсем пулăшу ыйтма пирĕн пата килеççĕ. Шалти ĕçсен пайĕ вара вĕсене яланах пулăшма хатĕр»,– терĕ Евгений Иванович.

Шалти ĕçсен пайĕ юлашки вăхăтра уйрăм çынсене хирĕç тăвакан преступленисене асăрхаттарас тата вăхăтра уçса парас ыйтусем çине тимлĕрех пăхать. Евгений Иванович палăртнă тăрăх кун пек преступленисене отчетлă тапхăрта пурне те уçса панă.

Шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ çавăн пекех «Шырав» тата çийĕнчех ĕçе тытăнакан ушкăнсен ĕçне ырă енчен палăртрĕ. «Шырав» ушкăн тăрăшнипе преступлени тунисене тытса чарнă тĕслĕхсем 5 пулнă, 5 преступленине те уçса панă. Çийĕнчех ĕçе тытăнакан ушкăн вăйĕпе айăплисене 7 тытса чарнă, вĕсене пурне те уçса панă.

Евгений Иванович çавăн пекех тунă преступленисене тĕпчес тата уçса парас, шырав мероприятийĕсем, обществăлла йĕркелĕхе тата обществăлла хăрушсăрлăха тивĕçтерес, çул çитменнисем хушшинче преступленисем тăвассине чакарас ыйтусем çинче те тĕплĕ чарăнчĕ, правăна пăсассин профилактикин, çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕсене хускатрĕ. Кунсăр пуçне экстремистла пулăмсене асăрхаттарасси, преступленисене йĕркелесе тăвассипе, хĕç-пăшалпа саккунсăр майпа усă курассипе, наркотиксемпе, алкоголь продукцине йĕркене пăсса сутнипе кĕрешесси те – паянхи кун ыйтăвĕсемех. Çул çитменнисем преступлени тăвас çул çине тăрасси, ӳсĕрле тăвакан преступленисен шучĕ ӳссе пыни, унччен преступлени тунисем çакăнтан тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тумасăр каллех суд тенкелĕ çине лекессин шайĕ чакманни шухăшлаттармаллипех шухăшлаттарать, ку тĕлĕшпе ытларах ĕçлемеллине пĕлтерет.

Канашлура çавăн пекех районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ М.М. Мясников та тухса калаçрĕ. Вăл палăртнă тăрăх ют çын пурлăхне çаратнă-вăрланă тĕслĕхсем кăçал чакнă. Наркотиксем сутнă-туяннă тĕслĕхсене палăртман.

Шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн çумĕ, обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн пуçлăхĕ В.А. Григорьевс профилактика ĕçĕ-хĕлĕн пĕлтерĕшĕ пирки каласа пачĕ. Иртнĕ виçĕ уйăх хушшинче тĕрлĕрен 20 мероприяти, вăл шутра операцисемпе рейдсем т. ыт. те иртнĕ. Ял тăрăхĕсен территорийĕсенче профилактика кунĕсене иртересси йăлана кĕнĕ. Çак вăхăта вĕсем 12 ял тăрăхĕн территорийĕнче иртнĕ те ĕнтĕ.

Канашлура çавăн пекех шалти ĕçсен пайĕн ытти сотрудникĕсем те тухса калаçрĕç.

Район прокурорĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Ю.М. Семенов тата район сучĕн председателĕ Э.Л. Тарасова хăйсен сăмахĕнче саккунлăхпа право йĕркелĕхне тивĕçтерессипирки чарăнчĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов канашлура тухса калаçнă май çавна палăртрĕ. Преступленисене асăрхаттарас, право йĕркелĕхне тивĕçтерес тĕлĕшпе пур структурăсем те пĕрле çыхăнса ĕçлени пысăк пĕлтерĕшлĕ. «Енчен те районта çирĕп йĕркелĕх пулать пулсан çынсен культури те ӳсет. Ун чухне хамăрăн умри нумай ыйтусене те ăнăçлăрах татса пама май килĕ»,– терĕ Юрий Александрович. Вырăнсенче право йĕркелĕхĕн шайĕ епле пуласси вара хамăртанах килнине палăртрĕ вăл.

Канашлу итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май шалти ĕçсен министрĕн çумĕ Ю.В. Шаповалов кулленхи профилактика ĕçне анлăлатса пыма кирлине палăртрĕ. Милицин участоксенчи уполномоченнăйĕсен вырăнсенче ял çыннисем тĕлĕшпе активлăрах ĕçлес пулать. Граждансене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнассин пĕлтерĕшĕ пирки те манма юрамасть. Пĕтĕмĕшле вара районти шалти ĕçсен пайĕн кăçалхи пĕрремĕш кварталти ĕçне «вăтам» хак памалла тесе палăртрĕ Юрий Владимирович.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» напоминает

## Осторожность и строгое соблюдение правил пользования газом гарантируют вам безопасность

**Уважаемые собственники и наниматели квартир, владельцы индивидуальных домов, использующие газ на бытовые нужды!**

Для исключения случаев причинения ущерба и неприятностей себе и окружающим соблюдайте Правила пользования газом в быту.

Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» напоминает, что **во избежание несчастных случаев Вы обязаны**:

- проходить инструктажи по безопасному пользованию газом в быту в техническом кабинете филиала «Моргаушимежрайгаз» при первичном заселении или обмене квартиры, при первичном пуске газа, а также при проведении технического обслуживания внутридомового газового оборудования. Иметь инструкции по эксплуатации оборудования и соблюдать их;
- следить за нормальной работой газового оборудования, проверять тягу до включения и во время работы газовых приборов с отводом продуктов сгорания газа в дымоход;
- при неисправности газового оборудования, дымовых и вентиляционных каналов, при внезапном прекращении подачи газа закрыть немедленно все краны перед газовыми приборами и сообщить в аварийную службу филиала «Моргаушимежрайгаз» по телефону **04** или **60-2-24**. О неисправности дымовых и вентиляционных каналов многоквартирного дома сообщать также в эксплуатирующую жилищную организацию;
- при появлении запаха газа немедленно прекратить пользование им, перекрыть краны к приборам и на приборах, открыть окна или форточки для проветривания помещения, не включать и не выключать электроприборы, не зажигать огня, вызвать аварийную газовую службу по телефону **04** или **60-2-24** (из незагазованного помещения или от соседей);
- обеспечивать доступ работников филиала по предъявлении ими служебных удостоверений для осмотра, обслуживания и ремонта газового оборудования в период проведения указанных работ, а при аварийных ситуациях – в любое время суток;
- производить за свой счет покраску принадлежащих Вам участков внутреннего и наружного газопровода;
- нести затраты по ремонту опор и креплений, перекладке и капитальному ремонту (в необходимых случаях – замене пришедших в негодность) принадлежащих ему газопроводов и газового оборудования;
- экономно расходовать газ, своевременно оплачивать его стоимость и стоимость технического обслуживания газового оборудования;
- ставить в известность предприятие газового хозяйства при выезде из квартиры на срок более 1 мес.

**Категорически запрещается:**

- производить самовольное подключение, перестановку, изменение конструкции, замену и ремонт газовых приборов, баллонов и запорной арматуры, а также не осуществлять перепланировку помещения, где установлены газовые приборы, без согласования с филиалом «Моргаушимежрайгаз»;
- изменять устройство дымовых и вентиляционных систем, заклеивать вентиляционные каналы, замуровывать люки, предназначенные для чистки дымоходов;
- отключить автоматику безопасности и регулирования, пользоваться газом при неисправных газовых приборах, автоматике, арматуре и газовых баллонах, особенно при обнаружении утечки газа;
- пользоваться газовыми приборами при закрытых форточках, решетках вентиляционных каналов, отсутствии тяги в дымоходах и вентиляционных каналах, т.к. загрязнение помещения продуктами сгорания приводит к выделению угарного газа, при вдыхании которого через несколько минут наступает отравление;
- оставлять работающее газовое оборудование без присмотра (кроме приборов с автоматикой, рассчитанных на непрерывную работу);
- допускать к пользованию газовыми оборудованиями детей дошкольного возраста и лиц, не контролирующих свои действия и не знающих правил пользования этими приборами;
- использовать газ и газовые оборудования не по назначению;
- пользоваться помещениями, где установлены газовые приборы, для сна и отдыха;
- хранить в подвалах порожние и заполненные сжиженным газом баллоны.

Помните, что ответственность за безопасную эксплуатацию бытовых газовых приборов в домах и квартирах, за содержание их в исправном состоянии и в соответствии с требованиями «Правил пользования газом в быту» и паспортов на газовые приборы заводов-изготовителей несут владельцы и лица, пользующиеся газом.

**Филиал «Моргаушимежрайгаз».**

# «Паянтан çур аки пуçланчĕ»

**Агрономсемпе инженерсен конференцийĕнчен**



***Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсенче çур акине хатĕрленессипе пур енлĕн ĕçлеççĕ. Уйрăмах ял хуçалăх техникине хире юсавлă кăларасси пĕлтерĕшлĕ ыйту пулса тăрать. Ку енпе пур хуçалăхра та çанă тавăрса ĕçлеççĕ.***

***Агрегатсем çурхи уй-хир ĕçне хатĕр. Çапла çирĕплетрĕç Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн машинăпа трактор паркĕнче. Сирĕн умра техникăна хире кăларма хатĕрлекен механизаторсем (сулахайран сылтăмалла): Валерий Егоров, Александр Александров, Алексей Петров. Вĕсем хăйсен пурнăçламалли ĕçĕсене те пĕлеççĕ ĕнтĕ.***

Çулпа çул пĕр пек килменнине районти çĕр ĕçченĕсем кăçалхи çанталăк условийĕсенчен те кураççĕ. Хăйне евĕр йывăрлăхсем, унччен пулман ыйтусем кăларса тăратрĕç юрлă хĕл кунĕсем хресчен умне. Çакна кашниех ăнланса ĕçлесе пымалла пек туйăнать паян. Çурхи шыв-шур сассипе тулнă апрель уйăхне çĕр ĕçĕпе пурăнакан чăваш çынни ака уйăхĕ тесе ыт ахальтен каламан: хĕл ыйхинчен вăраннă тĕнче çур акине хатĕрленет. Çурхи ака-суха çулталăк тăрантаракан чи ответлă тапхăр пулни те çĕр ĕçĕпе пурăнакан кашни çыншăнах паллă. Хаклать ăна вăл. Хаклать те иркаçа пăхмасăр çĕр-аннемĕр умĕнчи яваплăха туйса уй-хир ĕçĕсене хатĕрленет. Епле пырать-ха çак хатĕрленӳ? Çак ыйту çине тулли хурав илессипе иртнĕ эрне кун, ака уйăхĕн 8-мĕшĕнче, район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ йĕркеленипе районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен инженерĕсемпе агрономĕсен çур аки умĕнхи йăлана кĕнĕ конференцийĕ иртрĕ. Хăйне евĕрлĕрех пулчĕ вăл кăçал. Малтан ирлесе хуçалăхсен ертӳçисем, агрономĕсемпе инженерĕсем икĕ ушкăна пайланчĕç. Вĕсем кашни ял хуçалăх производство кооперативĕнчех çур акине хатĕрленес ĕçсем епле пынипе вырăна çитсе паллашрĕç. Пĕтĕмлетĕве вара пĕрле пухăнса Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнче Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче иртгерчĕç. Çур акине хатĕрленнĕ май калаçмалли, сӳтсе явмалли вара сахал мар.

**ХИРЕ ТУХМА ХАТĔРПЕ ПĔРЕХ**

Ял хуçалăх производство кооперативĕсене çитес çур акине хатĕрленес ĕçсем епле пынипе паллашнă май пур çĕрте те хатĕрленӳ ĕçĕсем калкал пыни курăнчĕ. Çапах та вăрлăхпа сĕрмелли-çунтармалли материалсен ыйтăвне татса панисен техника юсавĕн хăвăртлăхне ӳстермелли курăнать. Е техника паркĕнче ĕç шавĕ тăрать пулсан та вăрлăх янтăлассипе ĕçсем уксахлаççĕ.

– Хресчен ĕçĕ çăмăл пулман. Темĕнле çĕнĕ технологи ĕçе кĕртсен те кунта çăмăл пулĕ тесе калаймăн, мĕншĕн тесен яваплăхĕ пысăк. Çавăнпа та хăвăрт ăшăтса пыракан кунсенче кашни çитменлĕхех шута илсе ăна ыранхи куна хăвариччен татса пама тăрăшмалла. Уй-хире тухакансене умра тăракан ĕç планĕпе тата ĕç условийĕсемпе паллаштарасси – паянхи тĕп тĕллев. Хуçалăх ертӳçисемпе агрономсен тата инженерсен çакăн пирки те манас марччĕ. Паянхи кашнин яваплăхĕ вăхăт иртнĕçемĕн акасуха ăнăçăвне çаврăнĕ, кĕлет пуянлăхне ӳстерĕ. Çавăнпа та паянхи конференцирен çур аки пуçланчĕ тесе каласан та йăнăш пулас çук, – терĕ пĕтĕмлетӳре Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ С. Павлов.

Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир район ĕçченĕсем çывхаракан çур акине хатĕрленнин саманчĕсене куратăр. Кашнин хăйĕн ĕçĕ, кашнин хăйĕн тĕллевĕ. Хуçалăхсем çур акине хатĕрленес ĕçсене контроллесех тăраççĕ. Тимлев пĕтĕмлетĕвĕ вара куç умĕнчех.

Инженерсемпе агрономсен конференцийĕ пынă кун Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн ĕçченĕсем – трактористсемпе водительсем – хăйсем çурхи уй-хир ĕçĕсене хатĕрririне пĕлтерчĕç. Ĕçсем çакнашкал кал-кал пынине шута илсех ĕнтĕ хуçалăх ертӳçи И. Николаев конференцие хутшăнакансене хуçалăх пĕтĕмĕшле çур акине хатĕрри пирки пĕлтерчĕ. Хуçалăх минераллă удобренисемпе сĕрмелли-çунтармалли материалсен ытларах пайне туяннă, çитменнине туянма килĕшӳсем туса хунă, вăрлăхлăх культурăсене ака кондицине çитернĕ.

– Çĕнĕлĕхсене алла илекенсем хушшинче ытларах çамрăксем. Çур акине хутшăнакан тракторист-машинистсем ĕçе юратнинче, ĕç дисциплинине хăй еккипе яманнинче хуçалăх малашлăхне куратпăр. Пĕрле пулса çур акине те агротехникăпа пăхнă пек кĕске тапхăрта ирттерессе шанатпăр, – терĕ Игорь Васильевич.

**КАЛАÇСА ТАТĂЛТĂМĂР**

Тĕл пулăва район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Калинин уçрĕ. «Кун тăршшĕ вăрăмланнă май çанталăк ăшăтни çур аки кунсерен çывхарнине систерет. Çурхи уй-хир ĕçĕсене вăхăтра та пысăк пахалăхпа ирттересси паян ял хуçалăх техникине ĕçе хатĕрлессин тĕп тĕллевĕ пулса тăрать. Унран пĕлтерĕшлĕрехххи халĕ çĕр ĕçченĕшĕн çук»,– терĕ Владимир Аркадьевич.

Конференци Вăçкассинчи мехпаркра акара тухăçлă ĕçлемелли машинăсемпе тракторсене çур акине епле хатĕрленине пăхнинчен пуçланчĕ. Кунта район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп агрономĕ А. Павлов канашлăва килнисене çĕнĕ техникăн технологилле хăвачĕпе паллаштарчĕ. Техника çур акине епле хатĕр пулнинчен умри тĕллевсене туллин пурнăçласси килет.

Çитес çур акире районти хуçалăхсен 9,8 пин гектар çинче акса-лартса хăвармалла. Вăл шутран çурхи тĕш тырă культурисем 6,8 пин гектар, çĕр улми 1400 гектар, пахча çимĕç 120 гектар, пĕр çул ӳсекен курăксем 1147 гектар, силослăх культурăсем 300 гектар йышăнмалла. Çавна валли паянхи куна хуçалăхсенче 2191 тонна (85 процент) ака кондицине юрăхлă вăрлăх пур. Вĕсенчен 14 проценчĕ – элитăллă вăрлăх, 51 проценчĕ – 1-4 репродукцилли. Вăрлăх янтăланипе пĕрлех хуçалăхсем паянхи куна 796 тонна (43 процент) минераллă удобрени туяннă. Удобренисем «ВТМ», «Путь Ильича», «Свобода», Суворов яч. хис. хуçалăхсенче хальлĕхе пачах та çук.

– Ял хуçалăх предприятийĕсенчи мехпарксенче çур акине епле хатĕрленнине пăхса тухни паян «Оринино», «Восток», «Свобода», «Герой», «Ударник», Суворов яч. хис., Ильич яч. хис. хуçалăхсем çур акине ыттисенчен хатĕртерехххине кăтартса пачĕ. Çав вăхăтрах «Передовик», «Путь Ильича», Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсенче çур акине тухмалли техникăна юсас ĕçсем пуçланаççĕ кăна-ха. Мĕн кĕтеççĕ, мĕн шанаççĕ вĕсем – калама хĕн, – терĕ Чăваш Республикин Патшалăх техника надзор инспекцийĕн ертӳçи В.П. Димитриев.

Ĕçлесен пурăнма та, аталанма та пулатех. Çакна иртнĕ çулхи ял хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕ те кăтартса пачĕ. Шăрăх çанталăка пăхмасăрах агротехнологие пăхăнакансем япăх мар тухăç илме пултарчĕç. Пĕтĕмĕшле илсен хуçалăхсем 1559 миллион тенкĕлĕх (2009 çулхин 83,4 проценчĕ) продукци туса илме мехел çитерчĕç.

Ял хуçалăх продукчĕсем туса илме кайнă тăкаксене анализ тусан эпир чылай чух çĕнĕ техникăпа технологисене çул паманни курăнать.

Пĕлтĕр районти хуçалăхсем 21,3 миллион тенкĕлĕх 38 единица ял хуçалăх техники çĕнĕрен туяннă. Машинăпа трактор паркне çĕнетессипе Ильич яч. хис., «ВаСем», «Ударник» хуçалăхсем ытларах тăрăшнă. Паянхи куна хуçалăхсенчи 212 трактортан 179-шĕ (84 процент) юсавлă. Ял хуçалăх машинисем ĕçе хатĕрри те 81-87 процентпа çеç танлашать.

Конференци лăпкă та ĕçлĕ лару-тăрура иртрĕ. Кун тăршшĕ 14 сехете çывхарни, хĕвел çӳлтен çӳле хăпарни, çут çанталăк кайăк юррипе тулни çур аки сехетпе мар, минутпа çывхарни пирки систерсех тăрать.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Район патриочĕ çинчен**

# Вăл яланах çамрăксемпе

**(Малалли. Пуçл. 22-мĕш номерте)**

## «Ăçта Георгий?»

Тепĕр çулне Сосновка каччи районăн пĕрлештернĕ командин йышĕнче республика чемпионĕ те пулать. Çакăн хыççăн Г. Лукиншăн волейбол хобби пулса тăрать. Кун пирки манăн пĕлĕшĕм хăйĕн çинчен пĕр интереслĕ истори те каласа пачĕ. Мăшăрĕн куккăшĕ, ирĕклĕ кĕрешӳ ăсти В. Смородинов пĕррехинче Лукинсем патне хăнана пырать. Кил хуçи çук.

– Ăçта Георгий? – ыйтать хайхискер Нина Николаевнăран (Георгий Егорович мăшăрĕнчен).

– Вăл хăйĕн пĕрремĕш арăмĕ патне кайрĕ, – хуравлать хĕрарăм.

Куккăшĕн сăнĕ самантрах улшăнать:

– Епле-ха капла?

Нина Николаевна кулса илет те:

– Унăн пĕрремĕш арăмĕ волейбол çав, – тет.

Ĕмĕрне волейболла выляссине халалланă ветеран Ильич яч. хис. хуçалăх командишĕн çамрăксем хушшинче выляса 55 çул тултарсан та район чемпионĕ пулса тăрать. Çав çулах Шуршăлта Андриян Николаев космонавт кубокĕшĕн республика ăмăртăвне хутшăнса Ильич яч. хис. хуçалăх командипе 3-мĕш вырăн йышăнса таврăнать.

Ĕç ĕмĕрне спортпа туслă ирттернĕрен паян та çамрăклăхпа сыв пуллашман Георгий Егорович волейбол вăййин ăсталăхне çамрăксене парассипе тимлет.

– Сирĕн командăн «Сендрух» ячĕ мĕне пĕлтерет тата ăçтан тухнă вăл? – ыйтатăп спорт ветеранĕнчен.

Г. Лукин ăшă кулă парнелерĕ те сăпайлă çеç çапла хуравларĕ:

– Сендрух – ман асаттен вăрманĕ. Паян пирĕн командăра 30 яхăн ача ăсталăх пухать. Вĕсем районта лайăх выляни мана савăнтарать кăна. Асатте вăрманĕ – манăн пурнăç тĕкки.

## Вьетнам паян та асран тухмасть

– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх эсир волейболла выляссипе колхозпа районта кăна мар, республикăпа унăн тулашĕнче те ырăпа палăрнă. Кунта манăн сирĕнтен инçетри Вьетнам çĕр-шывĕнче волейболла выляни пирки ыйтса пĕлес килет. Ăçтан тупăнчĕ ку телей?

– Вăл вăхăтра Совет Союзĕнче производствăра малта пыракансене чысласси çирĕп кун йĕркинчеччĕ. Эпĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсем вĕçĕнче республикăри «Промсвязьмонтаж» предприятире çыхăну монтажникĕ пулса ĕçлеттĕмччĕ. Район тулашĕнче пулсан та Муркаш ен волейболĕшĕн вăхăт шеллемен. Тăтăшах Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн волейбол командин капитанĕ пулнăран хамăр енри спорт аталанăвĕшĕн хытах тимлеттĕм. Ялта е хулара – волейбол яланах кӳршĕреччĕ. 1980 çулта «Промсвязьмонтаж» предприятин волейбол команди республикăра 1-мĕш вырăна тухрĕ. Çакăн хыççăн ĕçре палăракан тата ăстарах волейболистсенчен Чăваш Республикин пĕрлештернĕ командине йĕркелерĕç те (20 çын) туристсен путевкипе Вьетнама кайма хатĕрлеме пуçларĕç. Пирĕн унта Чăваш Ен волейболне кăтартмалла имĕш! Хатĕрленӳ ĕçĕсем 2 уйăха пычĕç. Тивĕçлĕ хатĕрленĕве кура спортри ăсталăха та çӳллĕ шайра кăтартрăмăр, хамăр пите хĕретмерĕмĕр.

**(Вĕçĕ пулать).**

**Сывă пурнăç йĕркишĕн**

# Çăлавçăсем ăмăртрĕç



Сывă пурнăç йĕрки малта пулмалли пирки паян тĕрлĕ шайра калаçаççĕ. Çакă çеç ыранхи çирĕп пурнăçăн шанчăклă никĕсĕ пулнине те кашниех ăнланатпăр. Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕнче те сывă пурнăç йĕркине çирĕп тытса пыраççĕ. Кунта çулсеренех республикăри пушар чаçĕсем хушшинче спартакиада ирттерессი те ырă йăлара. Кăçал çак спартакиадăн пĕр тĕсне – 4 çын 50-шар метр дистанципе эстафета ишессине – Муркашри «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче ирттерчĕç. «Муркашра тахçанах пулманччĕ. Анчах кунашкал физкультурăпа спорт комплексне курсан татах килес ĕмĕт çуралчĕ. Эсир лайăх ĕçлеме кăна мар, тухăçлă канма та пĕлетĕр», – терĕ ăмăртура палăрнă хастарсене чысланă **(сăн ӳкерчĕкре)** хыççăнхи кĕске калаçура С. Ерофеев, Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн пуçлăхĕн заместителĕ.

**А. ПЕТРОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Саккунлă йышăнăва пурнăçламасан ...

**Судра**

***Федераллă судсен, миравай судьясен саккунлă хушăвĕсене, ыйтăвĕсемпе чĕнĕвĕсене пурин те пурнăçламалла – патшалăх влаç органĕсенчен пуçласа граждансем таранах. Çакăн пирки «О судебной системе Российской Федерации» федераллă конституци саккунĕнче калană.***

Анчах та суд йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ административлă е уголовлă наказание айăпланнисен çурри ытла хăйсен ирĕкĕпе пурнăçламасть. Ытларах чухне административлă е уголовлă штраф пани çинчен, обязательнăй е тӳрленмелли ĕçсем тĕлĕшпе тунă йышăнусене пурнăçламаççĕ.

Саккунпа килĕшӳллĕн суд йышăнăвне пурнăçламаннишĕн явап тытмалла. Административлă штрафа вăхăтра тӳлеменшĕн унăн калăпăшĕнчен икĕ хут пысăкрах штраф тӳлеме тивет. Е тата гражданина вун пилĕк кунччен арестлеме ирĕк пур.

Иртнĕ çул Муркаш районĕнчи 1 № суд участокĕн миравай судйи административлă штрафа 30 кун хушшинче тӳлемен вунă гражданина икĕ хут пысăкрах штраф тӳлеттерме, тăхăр гражданина арестлеме йышăнусем тунă. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта вара штраф вăхăтра тӳлемен тăхăр гражданина явап тыттарнă: тăваттăшне штраф тӳлеттерме, пиллĕкĕшне арестлеме йышăннă.

Муркаш районĕнчи 2 № суд участокĕн миравай судйи судăн саккунлă йышăнăвне хăйсен ирĕкĕпе пурнăçламаншăн пĕлтĕр сакăр гражданина явап тыттарнă пулсан кăçалхи пĕрремĕш кварталта тăвата çынна явап тыттарма йышăнусем кăларнă.

Тĕслĕхрен, Çĕньял Апаш ялĕнче пурăнакан М. гражданина пассажирсене турттармалли йĕркене пăснăшăн январĕн 22-мĕшĕнче судпа айăпланă, 500 тенкĕ штраф тӳлеме йышăну тунă. Штрафа вăхăтра тӳлеменрен гражданин тĕлĕшпе тата тепĕр йышăну кăларнă: виçĕ талăклăх арест.

Теприне – Чуманкассинче пурăнакан Ф. гражданина – пĕлтĕр ноябрĕн 21-мĕшĕнче административлă йĕркене пăснă тесе çирĕплетнĕ. Вăл транспорт чарăнăвĕнчи йĕркене пăснă. Çакăншăн водителе суд 100 тенкĕ штраф пама йышăннă. Суд йышăнăвне пурнăçламанран тепĕр йышăну тума тивнĕ: 200 тенкĕ штраф пама.

Суд йышăнăвне пурнăçламаннине çак икĕ гражданин штраф пирки манса кайнипе ăнлантарнă.

Муркаш районĕнчи 1 № суд участокĕн миравай судйин пĕлтĕрхи октябрĕн 7-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе Муркашра пурăнакан К. гражданкăна 3500 тенкĕ штраф пама çирĕплетнĕ. Анчах та хĕрарăм йышăнăва пурнăçлама та шутламан. Саккунпа килĕшӳллĕн ăна 140 сехет тӳрленмелли ĕçсене явăçтарма йышăннă. Халĕ вăл Муркаш ял тăрăхĕнче çӳп-çап пуçтарать.

Çуткӳл ялĕнчи А. гражданина кăçал февралĕн 28-мĕшĕнче суд айăплава шута илсе виçĕ уйăх тӳрленмелли ĕçсене явăçтарма тата уйăхсерен ĕç укçин 15 процентне патшалăх хыснине пама йышăннă. Арçын ĕçлеме килĕшменрен малтанхи наказание пĕр уйăхлăх çирĕп йĕркеллĕ колоние ярассипе улăштарнă. Ку йышăнупа арçын суд залĕнчех килĕшнĕ.

**Т. САЛДЫРКИНА,**
**миравай судья.**

# Чирличчен малтан сыхланмалла

**Врач сĕнет**

***«Врач сĕнет» рубрика малашне кашни юн кун тухма тытăнать. Унта сире врачсен тĕрлĕ канашĕпе паллаштарăпăр. Ыйтусем пулсан, пĕрпĕр чир пирки ытларах пĕлес тесен редакцие çак номерпе шăнкăравласа пĕлтерĕр: 62-1-38. Сире хаваспах итлĕпĕр.***

***Шăнса пăсăлас мар тесен мĕн тумалла? Çак ыйтăва паян район терапевчĕ Э.А. ФОМИНА панă сĕнӳсемпе хуравлатпăр.***

Сивĕ те йĕпе-сапаллă çанталăк вăхăтĕнче часах шăнса пăсăлма пулать. Вирус çаклатас мар тесен чире малтанах асăрхаттарма тăрăшмалла.

Çыннăн нерв тытăмĕ хавшак пулсан вăл часах чирлеме пултарать. Пĕрмай мĕншĕн те пулин пăшăрханни, мĕнрен те пулин хăрани çыннăн иммунитет вăйне чакарать. Çапла вара вăйсăр çын пур чир-чĕре те хăй патне туртать. Стрессем япăх çывăрасси е пачах та çывăрайманни патне илсе çитерме пултараççĕ. Ăна пула чĕре тымарĕсен тытăмĕ япăхрах ĕçлеме пуçлать.

Çак лару-тăрура хăвăра лăпкăрах тытма тăрăшмалла. Ку тĕллевпе анчăк курăкĕнчен (ромашка), пĕтнĕкрен (мята) хатĕрленĕ чей ĕçмелле. Чей ĕçнипе пĕрлех ытларах канмалли пирки те ан манăр. Нерв тытăмне лăплантарма çителĕклĕ çывăрни тата уçăлса çӳрени пулăшать.

Хăшĕ-пĕрин сиенлĕ йăла пур – чĕрне кăшласси. Малтанах чĕрне айĕнче микроб нумай пулнине шута илсе чĕрне кăшлама пăрахмалла. Хăвăра çак «ĕçпе» мар, урăххипе лăплантарма хăнăхмалла. Алăсене час-часах супăньпе çумалла.

Нумайăшĕ пирус туртнипе лăпланатпăр теççĕ. Анчах та пирус туртни лăпланма пулăшмасть, иммунитетпа нерв тытăмне хавшатать çеç. Пирус туртнăран ӳпке япăхса пырать. Çавăнпа та шăнса пăсăлнă вăхăтра е гриппа чирленĕ чухне ӳпкепе çыхăннă йывăрлăхсем пулма пултараççĕ.

Эрех ĕçни те ырри патне илсе çитермест. Мĕншĕн тесен çын мĕн чухлĕ нумайрах эрех-сăра ĕçет, унăн иммунитечĕ çавăн чухлĕ хавшать.

Çапла вара шăнса пăсăлас мар тесен иммунитета вăйлатасси пирки шутламалла. Сывă та активлă пурнăç йĕрки тытмалла. Кунта физкультура хусканăвĕсем туни, çуран утни, велосипедпа ярăнни, кунсерен пахчара пĕр сехетрен кая мар ĕçлени тата ытти те кĕрет.

Тепĕр сĕнӳ – çанталăка кура çипуç тăхăнни. Синтетикăран хатĕрленĕ тумтире тăхăнма тăрăшмалла мар, вăл ӳте сывлама памасть. Калпак тăхăнмалла, тутăр çыхмалла.

Çын йĕркеллĕ апатланать пулсан унăн иммунитечĕ те вăйлă пулать. Апла врачпа канашланă хыççăн поливитаминсем йышăнмалла. Сĕтел çинче йӳçĕтнĕ купăста, чĕрĕ улма-çырлапа пахча çимĕç пулмаллах. Суханпа ыхран усси пысăк пулнине те манмалла мар.

**ГИБДД асăрхаттарать**

# Транспорта çул хĕрринче ан хăварăр

Ейӳ тапхăрĕ пулнăран транспортпа ялсене кĕме май çук. Çавна пула водительсем автомашинăсене çул хĕрринче лартса хăвараççĕ. Ку пулăмпа вара «кукăр алăсем» усă кураççĕ. Юлашки вăхăтра топливо, автомагнитолăсем тата машина салонĕнчен ытти япаласене вăрлани пирки районти шалти ĕçсен пайне час-часах пĕлтереççĕ.

Çавăнпа та транспорт хуçисене тимлĕ пулма, çакăнпа пĕрлех машинăсене гаража е ялсем çывăхĕнчи çĕрĕпех çутă тăракан вырăнсене лартма ыйтса каласшăн. Машинăри хатĕре вăрланине сиссен, вăрă кам пулма пултарассине чухлатăр пулсан пĕр тăхтаса тăмасăр районти шалти ĕçсен пайне çак номерпе шăнкăравласа пĕлтермелле: 8(83541)62-6-67.

**В. ВОЛКОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн пуçлăхĕ.**

**К сведению заказчиков АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии**

**Наш расчетный счет в ОАО «Россельхозбанк» с 13 апреля 2011 года закрыт.**

**Для дальнейшей работы сообщаем новые реквизиты:**
**Минфин Чувашии (АУ Чувашской Республики «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» («Знамя победы») Минкультуры Чувашии)**
**л/сч 30126А00181 код дох. 85720**
**р/сч 40601810000003000001 ГРКЦ НБ ЧР БАНКА РОССИИ Г.ЧЕБОКСАРЫ**
**ИИН/КПП 21112390313/211201001, БИК 049706001**
**Адрес: 429530,Чувашская Республика, Моргаушский район, с.Моргауши, ул.Мира 9А. Телефон для справок: 62-1-35.**

**Культура**

# Чăвашсен çапла пулмалла та

Анаткас Апаш ялне Тойкилтĕри «Хĕлхем» (аслисен эстрада ушкăнĕ) тата «Хаваслă кĕвĕсем» (шкул ачисен эстрада ушкăнĕ) килессе пĕлсе ялти клуба чылайăн пухăнчĕç.

Концерта тивĕçлĕ шайра кăтартас тесе Юлия Аркадьевнăпа Владимир Владимирович Железновсем, Дина Ивановна Михеева нумай тăрăшни тӳрех курăнчĕ. Коллектив мĕнле ĕçлесси, мĕнле сывлăшпа сывласси ертӳçĕрен нумай килет-çке-ха. Железновсемпе Михеевсем килĕштерсе ĕçлени вара çак ушкăнсен пултарулăх шайĕнче лайăх палăрать. Концерт вăхăтĕнче коллективри кашни çыннăн чун-чĕри илем тĕнчишĕн ăнтăлни сисĕнчĕ. Ачасем те çав еннелле туртăнни вара уйрăмах савăнтарчĕ.

Алексей Железновпа Михаил Гордеев шăрантарнă илемлĕ юрăсем, Антонина Михеевăн хитре сасси, Алена Ярутковăпа Светлана Ивановăн сцена çинчи килĕшӳллĕ хусканăвĕсемпе усă сассисем, Михеевсемпе Железновсен çемйисем парнеленĕ чĕрене пырса тивекен юрăсем – пĕтĕмпех чун канăвĕ валли. Шкул ачисен тĕрлĕ ташшисем еплерех илем кĕртрĕç концерта. Çав вăхăтрах вĕсем чăваш юрри-ташшине мала хуни сисĕнчĕ. Пирĕн, чăвашсен, çапла пулмалла та.

Аслисем те, ачасем те пушă вăхăта усăллă ирттерччĕр, хăйсен пултарулăхне тупса ăна малалла аталантарччăр тесе тăрăшаççĕ коллективпа ĕçлекенсем. Çитĕнекен ăрăва воспитани парассинче ку пушшех те пĕлтерĕшлĕ.

Çапла хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарса Тойкилтĕсем пире тĕслĕх кăтартса пачĕç. Тĕнчипе паллă спортсменка Вера Соколовăн амăшĕпе курса калаçма та вăхăт тупрĕç хăнасем, асăнмалăх сăн ӳкерчĕксем те турĕç.

Анаткас Апаш ялне концертпа килсе кайнăшăн пултаруллă кӳршĕсене тав сăмахĕ калатпăр. Сирĕн ăнтăлу нихăçан та ан сӳнтĕр.

**А. СЕМЕНОВА.**

Анаткас Апаш ялĕ.

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**18 апреля с 15 до 16 час. в Р Д К**

**Слуховые аппараты**

лучших производителей Москвы, Дании, Германии - заушные, карманные: от 2700 до 8500 руб., цифровые аппараты: от 6200 до 10500 р. Пенсионерам скидка 500 р. Запчасти. Выезд на дом по заявке т. 89225036315

**Очки Панкова** – 6000 р. (бальзам–400р.) для восстановления зрения. Активатор «Живая - мертвая вода». Вибромассажные пояса для массажа и коррекции фигуры. Аппликатор «Колючий доктор»-720 р. Ионизатор (горный воздух). Обогреватель – картина. Отпугиватели грызунов на 100 и 500 кв.м. Дыхательный тренажер «Самоздрав». Ультразвуковые стиральные машинки. Электросушилка для овощей и фруктов-1200 р.

Имеются противопоказания. Ознакомьтесь с инструкцией.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 4-10.**

* * *

**СХПК «Герой» Моргаушского района ЧР принимает на постоянную работу трактористов-машинистов сельскохозяйственного производства и водителей грузовых автомобилей. Оплата труда своевременная и достойная.**
**Тел.: 67-5-79, 8-927-864-31-33. 3-3.**

* * *

**Продается новая двухкомнатная квартира по ул. Парковая. Туалет, ванна отдельно, есть кладовка, балкон, индивидуальное отопление, пластиковые окна.**
**Тел.: 8-906-383-71-12.**

* * *

**Покупаю мотор «Мопед» б/у 50 куб. см. Нарезка стекла 4 мм, 5 мм, узорчатое, зеркало с обработкой краев. Адрес: с. Моргауши, ул. Красная площадь, д. 3, станция юных техников. Тел.: 63-2-88, 8-903-063-91-39.**

* * *

**Продаю автомобиль ВАЗ-21102 2001 года выпуска. Тел.: 8-960-308-64-44.**

* * *

**Продаю доски обрезные, необрезные: сосна, береза. Брус, горбыль, баланс. Доставка бесплатно. Скидки. Тел.: 8-937-111-20-17.**

* * *

**Продаем керамзитобетонные блоки (20х20х40, 12х20х40), брусчатки, тротуарные плитки (0,30х0,30х0,25; 0,50х0,50х0,5), бардюрный камень. Доставка. Цена договорная. Тел.: 8-906-132-07-42, 8-960-304-49-32. 2-5.**

* * *

**Продается сено, доставка. Тел.: 8-919-672-15-55. Продаю корову. Тел.: 8-961-345-52-97.**

* * *

**Çиччĕ пăрулană хура-шурă ĕне сутатăп.**
**Тел.: 8-960-303-76-23.**

* * *

**Продается дом с надворными постройками, огородом 0,40 га в д. Сятракасы. Цена договорная. Тел.: 65-3-19 (после 18 часов), 8-905-341-40-33.**

* * *

**Продаю теплицы от производителя: 3мх4м, 3мх6м, 3мх8м, 3мх10м и т. д. Тел.: 8-903-322-45-77. 2-8.**

* * *

**«Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» ОАО 2011 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнчен 1 çул та 6 уйăхри («Хайсекс белый» ăратлă), çăмарта тăвакан чăхсем 70-шер тенкĕпе сутма пуçлать. Тел.: 8(83541)65-2-48. 2-5.**




**с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. 5-5.**


Совет и правление Моргаушского райпо выражают глубокое соболезнование Тарасовой Эльзе Леонидовне, председателю Моргаушского районного суда Чувашской Республики, в связи со смертью матери

**ПУГАЧЕВОЙ**
**ЛЕНЫ ФИЛИППОВНЫ**.

СХПК ПЗ им. Е. Андреева выражает глубокое соболезнование Тарасовой Эльзе Леонидовне, председателю Моргаушского районного суда Чувашской Республики, по поводу кончины матери

**ПУГАЧЕВОЙ**
**ЛЕНЫ ФИЛИППОВНЫ**.

Муркашри вăтам шкул коллективĕ кунта автобус водителĕнче ĕçленĕ

**Сергей Владимирович**
**НИКОЛАЕВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтерет.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ

**Иван Евграфович**
**КИРПИЧНИКОВ**

пенсионер вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.**
**Пичете панă 12.04.2011 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4329.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.